44-12

Инв. № 35774

ПĔР АКТЛĂ ПЬЕСĂСЕМ

*В. Потемкин*

# ĂШĂ ТĂЛĂП

*Чикарьковăпа Залесский*

# КАЛАНИНЕ ТУНИ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар—1944

ПĔР АКТЛĂ ПЬЕСĂСЕМ

*В. Потемкин*

# ĂШĂ ТĂЛĂП

*Чикарьковăпа Залесский*

# КАЛАНИНЕ ТУНИ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар—1944

Редактор С. ШУМКОВ.

НТ 555 Подписано к печати 17/II-44 г.
Объем 0,875 п. л. Тираж 1500 экз. Заказ № 257

Отпечатано в Канашской типографии Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР г. Канаш.

*В. Потемкин.*

# ĂШĂ ТĂЛĂП

Пĕр актлă, икĕ картинăллă пьеса.

ВЫЛЯКАНСЕМ:

Маша Степанова—колхозница.
Павел Степанович—ун упăшки, красноармеец.
Дарья Ильинична—Павел амăшĕ.

I-мĕш сцена

Ялти пÿрт. Чÿрече умĕнче чечексем. Арча, тенкелсем, урайне ковер сарнă. Пÿрт варринче сĕтел, пукансем. Стена çинче ватăрах çын портречĕ.

Занавес уçăлнă чух, Маша ещĕке çăм чăлхасем, шарăхсем хурать. Юрлакалать:

Кашни кун аса илетĕп
Юратан чуна.
Каç пулсассăн хыт кĕтетĕп,
Тусăмçăм, сана.
Анчах эсĕ аякра çав,
Аякра манран.
Усал фашист-тăшмансене
Вакласа туран.
Вăрçă иртĕ, эсĕ килĕн,
Килĕн мухтавпа.
Унчух эпĕр пит телейлĕн
Пурнăпăр санпа.

Ильинична кĕрет.

МАША. Анне, алшишсем ăçтарах-ши тата?

ИЛЬИНИЧНА (алшишсене парса). Аван-ха çĕркаç юлашки алшишне çыхса пĕтертĕм, унсăрăн ĕçе паян ниепле те майлаштарса çитерес çукчĕ: чуста та хумалла, пухăва та каймалла...

МАША (алшишсене тăхăнса). Эх, çав тери ăшă алшишсем! Эсир ĕнтĕ, анне, чи хастарлă хĕрарăм, пĕр пухуран та юлмастăр.

ИЛЬИНИЧНА. Ара, пухуран юлсан, кинĕм, кĕтсех тăр вара, мĕн те пулин илтмесĕр-пĕлмесĕрех юлан-çке. Ав, икшер мăшăр чăлха пуç, е алшиш çыхма йышăнчĕç. Вара эп çапла каларăм: „Эй, хĕрарăмсем! Вăрçăра камсем тетĕр-ха? Хамăр ывăлсем вĕт. Епле вара вĕсем валли мĕн те пулин хĕрхенсе тăрăпăр? Çапла калана хыççăн виçшер мăшăр çыхма пулчĕç.

МАША (япаласене çыхкаласа). Мĕн, пурте-и кунта? Урăх нимĕн те хумăпăр-и? (Çĕлĕкне каларать). Нумайранпа выртать, кĕве çисе яманши-ха?

ИЛЬИНИЧНА. Павăл çамрăк ача чухне, темскерле праçник чухнеччĕ пулас, илсе патăм ăна.

МАША. Эпĕ те астăватăп!

ИЛЬИНИЧНА. Астăватăп, тетĕн? Астăвăн-и вара? Анчах, унчух эсир пĕр-пĕрне палламан та. Хурас çĕлĕкне. Кирек кам илсен те—пурпĕр: хăйĕн сывлăхне сыхлама тăхăнтăр. Хут татки çырса хур. Çапла çыр: „Палламан хаклă боец“

—те— „сывлăхушăн тăхăнса çӳре“—те „ыр сунса сирĕн пата Степанов çемйинчен“—те!

МАША (у ç ă  а р ч а  ç и н е  п ă х а т ь). Анне, ак ку мĕн тата?

ИЛЬИНИЧНА. Ăçта? Хăшĕ?

МАША. А вăн çав, арчари. (К ă л а р а т ь). Эх, ку Павăлăн тăлăпĕ пулас! Эп ун çинчен мансах кайнă тата, хăçантанпа, çаплах выртать.

ИЛЬИНИЧНА (т ă л ă п н е  и л е т  т е  к а я л л а  х у р а т ь). Ку тăлăпа вилнĕ аçу илнĕччĕ, вăл—урăх йышши паха тăлăп. (К а р т о ч к а  п а т н е  п ы р с а  т у с а н н е  ш ă л а т ь). Çапла, лайăх пăхса усрарĕ, тăхăнма та хĕрхенетчĕ. Тепĕр чух: „праçник вĕт, мĕн текăна арчара усăсăр вырттаран“—тĕттĕмччĕ те—„юрĕ-çке, амăшĕ, эп мĕнле те пулин тăлăпсăр та çӳрекелĕп-çке. Ав, Павăл ӳсет, ун валли пултăр“—тетчĕ.

МАША. Темле, Павăл та сайра хутра çеç тăхăнкалатчĕ.

ИЛЬИНИЧНА. Вăл вĕри юнлă çын пулнă, ав халь фронтра чăрмантарсах кайнă пулмĕччĕ те ку тăлăп...

МАША. Анне?..

ИЛЬИНИЧНА. Мĕн сана?

МАША. Тăлăпне те пĕрле ярсан, пит аван пулĕччĕ те... (Т е п ĕ р  х у т  к ă л а р а т ь).

ИЛЬИНИЧНА. Павăл патне-и? Ăçта-ха ярăн ун патне, ав, пĕр уйăх иртрĕ, унтан пĕр сыру та илеймерĕмĕр.

МАША. Фронта ярăпăр! Кама кирлĕ çавна парĕç. (И л ь и н и ч н а  н и м  ш а р л а м а с ă р

т ă л ă п н е и л е т те к а я л л а а р ч а н а хурать).

МАША. Мĕн нимĕн те каламастăр?

ИЛЬИНИЧНА. Нимĕн çинчен те каламалли çук!

МАША. Мĕнле апла?

ИЛЬИНИЧНА. Каларăм сана, ку тăлăп урăх йышши тăлăп тесе. Ашшĕ—укçа пухса илнĕ тăлăп вăл, çавăнпа та Павăлсăр пуçне урăх никам та тăхăнмĕ вăл тăлăпа.

МАША. Çапла та-ха, анчах халь кунта Павăл çук вĕт?

ИЛЬИНИЧНА. Мĕскер, вăл киле таврăнмĕ тетĕн-им?

МАША. Эп ун пек шухăшпа каламарăм. Халь хĕле кĕтĕмĕр, сивĕ çывхарать. Тен çынсем унта шăнаççĕ. Эх, аннем!.. Вĕсем унта пирĕншĕн, хăйсен çамрăк пуçĕсене хĕрхенмесĕр вăрçаççĕ, эсир вĕсемшĕн тахçанхи тăлăпăра хĕрхенетĕр!?

ИЛЬИНИЧНА. Тархасшĕн ун пек сăмахсене мана ан кала. Эп вĕсемшĕн нимĕн те хĕрхенместĕп, анчах, ку тăлăпа пама—вăй çитмест. Ашшĕве, вилес умĕн:—„ку тăлăпа ывăлу валли усрăп"—тесе сăмах патăм.

МАША. Атте вилни нумай çулсем иртнĕ. Анчах хăй кунта пулсан,—чĕрĕ пулсан, ниепле те чăтса тăрас çук, „парас"—тенĕ пулĕччĕ вăл. Ывăлăм тетĕн! Унта мĕн, ывăлăрсем маршим саншăн? Хăвах паçăр пухура çапла каланă пулас та!..

ИЛЬИНИЧНА (а р ч и н е у ç а т ь, ш ы р а к а л а т ь). Юрĕ, ил... Павăл валли тесе усранăччĕ.

Пĕртте тăхăвман, çĕп-çĕнĕ. Анчах сан сăмахсем чĕре патнех çитнĕн туйăнчĕç. (Пĕр мăшăр çĕнĕ çăмат тыттарать). Тăлăпне...тăлăпне памастăпах, ан тапшыра. (Тухса каять).

МАША (ун хыççăн). Анне?!.. Итле-ха... Анне... (Йывăррăн сывласа). Çав тери хытă карчăк! Мĕн тăвас-ши-ха ĕнтĕ? (Шутлакаласа тăрать).

Чўречерен шаккаççĕ.

МАША (чўрече патне пырса форточкине уçать). Дуся, эсĕ-и? Япаласем пама каятăн-ши? Тăхта, эп халех!.. (Хăюллăн арча патне пырать те тăлăпне кăларать). Дуся! Илтетĕн-и? Пирĕн Дарья Ильинична фронта тăлăп та ярать.

— „Илĕрех, вĕсен сывлăхĕшĕн яратăп"—тет. Халех, халех! (Тăлăпне ытти япаласемпе пĕрле çыхать). Мĕн? Çапла, çапла! Вăл пирĕн, çавăн пек карчăк, хыт тăракан карчăк! (Тăлăпне хулпуççи çине хурать те тухса каять).

Ильинична кĕрет.

ИЛЬИНИЧНА. Машкă кайнă пулас... (Чўречерен пăхать). Темле ун çыххи питĕ пысăк пек туйăнать. (Арчана пырса пăхать). Чĕре сисрĕ, шухăшларăм—илсе каятех тесе, пĕр шухăшланă япалана тăватех вара шельмă. (Картăчкă çине пăхса). Ах, Иван! Хыт тăракан çын сан кинў! Тўрех калап: Павăлăн тивĕçлĕ арăмĕ.

## 2-мĕш сцена

Занавес вăхăтлăха хупăнать те каллех уçăлать. Маша сак çинче кĕнчеле арласа ларать. Ильинична краççин çути çывăхĕнче темскер çыхать (чăлха е алшиш), тулта çил улани илтĕнет.

ИЛЬИНИЧНА. Çанталăкĕ ахăрса карĕ, тур чартăрах!

МАША. Çил-тăман...

ИЛЬИНИЧНА. Фронтра епле чăтаççĕ-ши? Шăнчĕç те пулĕ, чунăмсем!..

МАША. Ăшă тăхăннисем шăнсах каймаççĕ пуль-ха.

ИЛЬИНИЧНА. Ак Павлушран икĕ уйăх ĕнтĕ çыру çук.

МАША. Çапла. (Арлама пăрахса пĕр тĕле пăхса ларать).

ИЛЬИНИЧНА. Эсĕ ытлашши ан хуйхăр-ха, ăшна ан тапрат. Тен, çыру çырма та вăхăт çук вĕсен. Ак нимĕçсене лайăххрах çапса ватать те вара, мĕн пулнисене йĕркеренех çырса пĕлтерет. (Маша арланине пăхать). Ытла хулăм арла пуçларăн, кăштах çинçерех арла.

МАША. Юрĕ-çке.

ИЛЬИНИЧНА. Епле апла—юрĕ-çке?.. Хăвна валли пулсан хăть, епле арласа тăхăнnă, çаплипех çĕтнĕ пулăттăн, кăна, боец аллине илĕ те: „эх, начар хĕрарăм ĕçленĕ япала“—тесе каласа хурĕ. (Чўречерен шăнкрав сасси илтĕне-илтĕне каять).

ИЛЬИНИЧНА. Такам килчĕ пулас?

МАША. Хамăр умран иртсе каякансем сахал-и вара!

Чӳречерен хыттӑн шаккаҫҫӗ. Васкаса чӳрече умне пырать.

Ой!.. (Ҫав тери хӗпӗртӳллӗн чакса тӑрать). Пулма пултараймасть!!. (Кӑшкӑрать). Павӑл! (Ҫенӗке чупать).

ИЛЬИНИЧНА. Маша! Мӗнле апла ку!

Маша хыҫҫӑн васкать.
Ҫенӗкре хаваслӑ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ.

ИЛЬИНИЧНА. Ах, савӑнӑҫ!.. Пашенька... Мӗнле-ха ку капла?! Мӗнле майпа эс?.. Ним сас-чӗв, ни ҫыру ҫукчӗ, кӗҫ хӑй килсе тӑчӗ!

ПАВЕЛ. Канма отпуск пачӗҫ те — ак киле килтӗм. Анне, эс хӑвах пӗлетӗн вӗт, ҫыру ҫырма юратсах каймастӑп... (Сак ҫине тӑлӑпне хывса хурать, аллине бинтпа ҫыхни курӑнать).

МАША. Эс, аманнӑ мар-и?

ИЛЬИНИЧНА. Эх, мӗскӗн!

ПАВЕЛ. Нимех те мар, халь тӳрленет ӗнтӗ.

МАША. Мӗнле-ха ку капла?.. Эпир нимӗн те пӗлмен... Ма хӑть ҫырса пӗлтермерӗн?

ПАВЕЛ. Мӗн унта ҫырасси?! Кӗҫ ҫыхнине те салтса пӑрахатӑп ак. Аллӑм малтанхинчен те ҫирӗпрех пулать. (Сӗтел хушшине ларать). Ну... мӗн ҫитерсе хӑналантаратӑр мана?

ИЛЬИНИЧНА. Халех.., халех... Тӑнран тухса кайнипе, ним тума пӗлмесӗр тӑтӑм-ха! Машенька, апат хатӗрле-ха, эп сӑмавар лартса ярам. (Тухса каять. Маша Павел ҫинчен куҫне ямасӑр апат хатӗрлет).

ПАВЕЛ. Аван сирӗн кунта. Ну, мансӑр епле

пурӑнкаларӑр? (Арӑмӗ патне ҫывӑха пырать). Мана манмарӑн-и, Маша?

МАША. Ухмах... (Ильинична кӗрет).

ПАВЕЛ. Эсӗ тата, анне, епле пурӑнкаларӑн.. Сывах-и?

ИЛЬИНИЧНА. Эпӗ аванах-ха, эс хӑвна нимӗҫ эсреллисем мӗнле майпа амантнине каласа пар-ха?!

ПАВЕЛ. Вӑл нимех те мар!..

МАША. Чӑн та, каласа кӑтартсам, чӗре вырӑнта мар вӗт, нимӗн те пӗлмен...

ПАВЕЛ. Енле эсир ҫав тери хыт тӑратӑр, каласа пар та каласа пар. Калатӑп вӗт-ха, кӑшт ҫеҫ аманнӑ тесе. Вот шӑнса вилме пултараттӑмччӗ... анчах юлташ ҫӑлчӗ. Юлташ ҫӑлман пулсан, эп кунта ҫитсе сирӗнпе пӗрле ларнӑ та пулмӑттӑмччӗ.

ИЛЬИНИЧНА. Ах, чӑнах-и?

МАША. Юлташ ҫӑлчӗ тетӗн?

ПАВЕЛ. Пӗрре эпӗ штабран тухса утсаттӑм. Хам ҫумра никама кӑтартма юраман секретнӑй пакет тата штабран парса янӑ посылка пурччӗ. Анчах посылки ӑшӗнче мӗн пуррине пӗлместӗп, мӗншӗн тесен, уҫса пӑхма вӑхӑт ҫук, ҫитменне каҫ умӗн. Пыратӑп. Кӑкӑр умӗнче пакет. Хул айӗнче посылка. Ҫав вӑхӑтра нимӗҫсем наступлени пуҫларӗҫ. Перкелешме пуҫларӗҫ. Ман тавра снарядсем ҫурӑла-ҫурӑла каяҫҫӗ. Кӗҫ, такам пырса тӗкнӗн туйӑнчӗ, алла ярса илтӗм, пӑхатӑп — юн!

МАША. Ой!

ПАВЕЛ. Хăтланкаласа алла сыхкаласа ятăм, анчах малалла кайма вăй çитмерĕ, çитменне ниçта кайма та çук. Юр çине выртрăм. Шухăшлатăп: мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, тетĕп? Ман часть ăçта-ши тесе шутлатăп, тен... Инçех мар çын сасси, калаçнине илтрĕм... Нимĕçле калаçаççĕ. Мана çавăрса илчĕç пулĕ тесе шутларăм. Ман ни пеме, ни гранатăсене ывăтма юрамасть, мĕншĕн тесен вĕсем вара эп пуррине сисме пултараççĕ. Ман пакета хытă сыхлас пулать. Эпле йывăрлăх пулсан та ман ăна командир патне çитерсе памаллах.

ИЛЬИНИЧНА. Вара, çитсе патăн-и хăть?..

ПАВЕЛ. Тăхта-ха, анне... Выртап çапла юр ăшĕнче. Те сехет иртрĕ, тен ытларах та. Нимĕçсем çаплах каймаççĕ. Шăна пуçларăм, юн нумай çухатнă пулнă, тата хам юн хамах шăнта пуçларĕ. Сивĕ, аманнă тĕлте кăвар пек пĕçертет. Упаленсе кăштах тăрăнтан куçрăм. Çук, — упаленсе çитме май çук, вăй пĕтрĕ. Ăшăмра сив шыв юхнăн туйăна пуçларĕ. Шăнса хыта пуçларăм. Вара шут тытрăм: тен вилмеллех пулсан, виличчен çак пакета пĕтерес, çунтарса ярас, терĕм. Кĕсъесене хыпаларăм, спичкă çук. Мĕн тăвас? Посылка çинчен аса илтĕм. Яланах тапакпа спичкă хурса яракан посылкăсем ăшне. Посылка ещĕкне хуллен уçрăм. Тĕлĕнмелле япала, пăхап—тăлăп! Çитменне—çав тери ăшă тăлăп! Паллах расна, праçник валли çĕленĕ тăлăп. Тăхăнтăм, ăшăнсах карăм, вара ним шăнмасăр ирчченех çапла

выртрӑм. Ирхине хамӑрӑннисем нимӗҫсене хирӗҫ контратакӑна карӗҫ. Мана госпитале хӑварчӗҫ, пакетне командира пачӗҫ.

МАША. Аван-ха пурте телейлӗ пулса пынӑ, урӑхла та пулма пултарнӑ вӗт...

ПАВЕЛ. Халӗ ӗнтӗ пурте йӗркеллӗ. Анчах ҫав каҫранпа вара конфеткӑсене курайми пултӑм (Конфеткӑ хунӑ чашкине аяккалла сирет).

МАША. Конфетсене? Мӗншӗн?..

ПАВЕЛ. Леш посылки ҫинче тӑлӑпсӑр пуҫне конфеткӑсем, папироссем нумайччӗ. Папироссене туртакан юлташсен кӗсйисене чикрӗм, конфеткисене ҫӗрӗпех чӑмласа выртрӑм, ҫавӑнпа пулмалла, халь курас та килмест.

ИЛЬИНИЧНА. Тӑхта-ха, Пашенька, эсӗ: ман пурнӑҫа юлташ ҫӑлчӗ темерӗн-и ҫав?

ПАВЕЛ. Юлташ! Тӗрӗс!

МАША. Кам-ши вара вӑл? Ӑҫта-ши?

ПАВЕЛ. А, вӑл кунтах, хампах!

ИЛЬИНИЧНА. Кунтах! Тур ҫырлахтӑрах, ара, чӗнес хӑвӑртрах. Ма-ха малтанах каламарӑн... Эп халех ун валли пурне те хатӗрлем. Ҫав тери пысӑк хӑна тӑвас пулать ӑна...

ПАВЕЛ. Ара, вӑл кунтах, хамӑрпах!

Хӗрарӑмсем тӑнран ҫухалса Павел ҫине пӑхаҫҫӗ. Вӑл тенкел ҫинчен тӑлӑпне илет.

Акӑ, ман юлташ, мана ҫӑлаканни. Кӗсйинче хут татки тупрӑм. „Степанов ҫемйинчен" тесе ҫырнӑ.

ИЛЬИНИЧНА. Машенька! Ара ку хамӑрӑн

тăлăпах-çке. Çапла, хамăрăннах! Сан аçу тăлăпĕ, Пашенька. Астăватăн-и? Леш,арчара выртни.

МАША. Чăнах та вăлах-и?

(Пурте пăхаççĕ).

ПАВЕЛ. Çук, анне. Санăн халь хĕпĕртенипе куçусем йĕпе-ха, çавăнпа та начар куратăн. Ку, пирĕн тăлăп мар. Леш, сан арчари тăлăпăн аркине кăвак çăмлă тиртен çĕленĕччĕ, çапла мар-и-ха?

ИЛЬИНИЧНА. Çапла. Çапла!

ПАВЕЛ. Ку тăлăп—кăвак мар, тата куратăн-и? Хулĕсем çинче тĕреллĕ çĕвĕсем пур.

ИЛЬИНИЧНА. Тĕрĕс, пирĕн апла марччĕ.

МАША. Анчах эпир те „Степанов çемйинчен" тесе çырнăччĕ те..

ИЛЬИНИЧНА. Эпир те хамăр тăлăпа фронта посылка туса ятăмăр.

ПАВЕЛ. Сахал тетĕр-им Степанов çемйисем, фронта тăлăп яракансем, çапла вĕт? Акă, эпĕ, хулсене хитрелетсе çĕленĕ тăлăппа çÿретĕп, тепри, сăмахран Иванов е Петров,—аркине кăвак çăмлă тиртен çĕленĕ тăлăп илĕ. Ак хайхи эпир татăклă пултăмăр та, тĕрĕсрех каласан—тăванлантăмăр та.

Çапла, пирĕн Хĕрлĕ Çарпа пĕтĕм халăх—пĕр çемье пек килĕштерсе пурăнать.

*Чаршав.*

*ЧИКАРЬКОВĂПА ЗАЛЕССКИЙ.*

# КАЛАНИНЕ ТУНИ

Пĕр пайлă комеди

ВЫЛЯКАНСЕМ:

**Добров**—врач.
**Богданов**—летчик.
**Машенька**—фабрикăра ĕçлекен хĕр.

Пахча. Тенкел çинче Богданов ларать. Сулахай аллине çыхнă. Сылтăм аллинче кĕнеке. Чылай ларсан, вулакалать, аяккалла пăхкаласа илет. Унтан тăрать те çыхнине салтать, аманнă аллипе гимнастика тăвать. Добров сасси илтĕнет. Богданов пытанать. Добров кĕрет.

ДОБРОВ. Богданов юлташ... юлташ Богданов... Ăçта кайса кĕчĕ-ха вăл?!. Тĕлĕнмелле халăх! Тĕлĕнмелле халăх! Ниепле те итлеттерме çук?.. (Т у х с а  к а я т ь).

Богданов тенкел çине тухса ларать. Аллине çыхнă, нимĕн те пулман пек кĕнеке вулама пуçлать. Добров каялла кĕрет.

ДОБРОВ (Б о г д а н о в а  к у р с а). Юлташ Богданов!

БОГДАНОВ. Эпĕ, доктор юлташ!

ДОБРОВ. Эсир кунта иккен.

БОГДАНОВ. Ман шутпа кунтах, доктор юлташ?

ДОБРОВ. Ку мĕне пĕлтерет?

БОГДАНОВ. Мĕн çинчен каласшăнччĕ эсир, доктор?

ДОБРОВ. Епле-ха ку,халь çех эсир кунта çукчĕ, халĕ ăçтан килсе ларнă?

БОГДАНОВ. Каласа пама хĕнтерех, доктор юлташ. Анчах, ман шутпа, ун пек кирек хăçан та пулма пултарать.Умра çын çук пулсан... вăл вара çуках... кунта килсе ларнă пулсан.., вăл çын пулнах, кунтах пулнă вăл.

ДОБРОВ. Гм... пулма пултарать.. А эсир мĕн тăватăр?

БОГДАНОВ. Уçăлса ларатăп.

ДОБРОВ. Апла иккен. А мĕншĕн процедурăна каймастăр?

БОГДАНОВ. Всеволод Михайлович, мана нимле процедура та кирлĕ мар... эп сывалса çитнĕ, ĕнентерсе калатăп, сывалсa çитрĕм!

ДОБРОВ. Калăр-ха мана тархасшăн, кам кунта доктор—эсир-и, эпĕ-и?

БОГДАНОВ. Ман шутпа, эсир...

ДОБРОВ. Ах, сирĕн шутăрпа çеç-и?

БОГДАНОВ. Каçарăр, Всеволод Михайлович. Эсир, эсир!

ДОБРОВ. Апла пулсан, акă мĕн. Эсир сывалса çитнипе çитменнине эпĕ сирĕнтен аванрах пĕлетĕп... Аманичченхи пекех сывлăх пултăр тесен, сирĕн татах та тӳрленмелле-ха.

БОГДАНОВ. Анчах, ман шутпа, эп çав тери сывалса çитрĕм пек... Чăн-чăнах доктор... çавăнпа та... çавăнпа та ĕнтĕ ман хамăн машина патне

кайма та вăхăт...Эсир пĕлетĕр-и, епле халь пирĕн пĕлĕт ҫинче—сывлăшра ĕҫсем нумай тăраҫҫĕ?

ДОБРОВ. Пĕлетĕп, пĕлетĕп.., ҫавах та сирĕн кăшт тăхтас пулать... Ҫапла, тĕплĕн сывалса ҫитес пулать, вара тин „пĕлĕт ҫине" кайма пултаратăр, ҫавăнпа та халь процедурăна кайма хушатăп...

БОГДАНОВ. Усал ҫын эсир, доктор юлташ.

ДОБРОВ. Усал ҫын ҫав. Тав сире куншăн... Анчах мĕншĕн усал-ха тата?

БОГДАНОВ. Усал ҫын пулмасăр... мĕншĕн тесен процедурăна кайма хушатăр, тата калама пулнине каласа памастăр.

ДОБРОВ. Мĕнле апла?

БОГДАНОВ. Астăвăр-ха, эсир, леш мана хăй юнне парса вилĕмрен хăтарнă хĕре кăтартма сăмах панăччĕ... анчах ăна паян куна та кăтартмастăр...

ДОБРОВ. Вăл итлесшĕн пулмарĕ, итлесшĕн пулмарĕ. А, чăннипе каласан—маннă.. Ҫавах та сăмах панă япалана пурнăҫлăп.

БОГДАНОВ. Эсир ятне ҫеҫ каларăр.! Машенька, терĕр. (Ш у т а  к а й с а). Машенька...

ДОБРОВ. Ҫапла, Машенька. (Ш у т а  к а й с а). Эх... Еплескер-ши вăл?

БОГДАНОВ. Доктор, уҫăлса ҫӳреме хулана кайма юрать-и?

ДОБРОВ. Ку мĕн тата?! Ҫук, ҫук, ниепле те юрамасть. Эпĕ сире ĕнер каҫхине ҫур сехетлĕх ҫеҫ ятăм... Эсир шăп икĕ сехете ҫухалтăр, ҫитменне тата ҫумăр айĕнче йĕпеннĕ хураҫи пек

йĕп-йĕпе пулса килтĕр... анчах та ĕнер çумăр çумарĕ, епле майпа йĕпеннине эпĕ халь те ăнланаймастăп. Çавăнпа та паян, уçăлса çÿрес вырăнне, процедурăна утăр!

БОГДАНОВ. Доктор, пăхăр-ха, акă епле эпĕ сывалса çитнĕ. (Т е н к е л е ç ĕ к л е т).

ДОБРОВ. Тархасшăн физкультурăпа кайран хăтланăр.

БОГДАНОВ. Тен, эпĕ пĕтĕмпех сывалса çитнине сире ку ĕнентерĕ? (Д о б р о в а п ĕ р а л л и п е х й ă т а т ь).

ДОБРОВ. Ярăр мана тархасшăн. Эпĕ сире çакна калам: акробатика ман чуна илĕртмест. Тĕлĕнмелле, пурте вара хăйсем сывалса çитнине ман урлă тĕрĕслеççĕ... Çавах та, процедурăна карăмăр!

БОГДАНОВ. Всеволод Михайлович!

ДОБРОВ. Карăмăр процедурăва!

БОГДАНОВ. Доктор...

ДОБРОВ. Юлташ Богданов! Николай Петрович! Хĕрлĕ Çарти пек ответ пар-ха мана...

БОГДАНОВ. Есть, Хĕрлĕ Çарти пек ответ пама.

ДОБРОВ (ç и л е н н ĕ п е к п у л с а, к а ш н и с ă м а х н е у й р ă м ă н к а л а с а). Кам кунта командир?

БОГДАНОВ (ç и р ĕ п л е т с е, х ы т т ă н). Эсир кунта командир, доктор юлташ!

ДОБРОВ. Апла пулсан, кунта кама итлемелле?

БОГДАНОВ. Сире итлемелле, доктор юлташ!

ДОБРОВ. Сире, тетĕр, çавăнпа та тархасшăн эп каланине пурнăçлăр..

БОГДАНОВ. Сире, тетĕп, çавăнпа та сăмахсăр итлетĕп..

ДОБРОВ. Апла пулсан, процедурăна шагом марш.

БОГДАНОВ. Есть, процедурăна шагом марш. (Хыттăн утса каять).

ДОБРОВ. Вот ку аван япала!

БОГДАНОВ (каялла кĕрсе). Всеволод Михайлович..

ДОБРОВ. Эсир каллех кунта-и?

БОГДАНОВ. Эпĕ çакна çех каласшăн, эсир командăна тĕрĕс памарăр... (Кулать).

ДОБРОВ. Тĕрĕс мар тетĕр-и?

БОГДАНОВ. Чăн... чăн калатăп...

ДОБРОВ. Вĕренмен çав, тăванăм,ниепле те вăхăт тупаймастăп.

БОГДАНОВ. Кăмăл тăвăр, хам вĕрентем?

ДОБРОВ. Юрĕ, анчах халь эсир мана улталаймăр, малтан процедурăна кайăр, кайран вара, тăванăм, мана вĕрентме килĕр, унчух сире ирĕк парăп мана командовать туса вĕрентме.

БОГДАНОВ. Ох, унчух сире хам алла çавăрса илĕп, доктор юлташ, эсир мĕн калăр вара? (Доктор каланăпек). Кам кунта...командир?

ДОБРОВ. Карăмăр, карăмăр, сире калатăп вĕт.

БОГДАНОВ. Каятăп, каятăп.., анчах лекетĕр эсир ман алла!

Кулаççĕ. Богданов каять.

ДОБРОВ. Ну, мĕнле халăх ку! Мĕнле халăх!

(Кулса). Аван халăх! (Ларать, пирус туртса ярать). Тĕлĕнмелле, медицинăна итлесшĕн те мар... Текех, пуçлаççĕ вара: „Эп уçăлса çитрĕм, доктор, мана хăвăртрах кăларăр, доктор, фронта хăвăртрах ярăр, доктор",—теççĕ.

Машенька кĕрет.

МАШЕНЬКА. Сывă-и доктор?

ДОБРОВ. А, Машенька, сывах-ха!. Тĕрĕссипе каласан, эп сирĕн çине кўрентĕм: Калăр-ха, сирĕн хăçан килмеллеччĕ кунта?

МАШЕНЬКА. Ĕнер..

ДОБРОВ. А килессе паян тин килтĕр.. Халь, вăрçă кунĕсенче, сăмаха тытманни питĕ начар япала вăл

МАШЕНЬКА. Доктор, эпĕ айăплă та, айăплă та мар.. Килменшĕн айăплă.. Анчах кĕтмен инкек пулчĕ, çавăнпа килеймерĕм, куншăн вара эп айăплă мар..

ДОБРОВ. Инкек тетĕр-и?

МАШЕНЬКА. Çапла, çитменне хăрушă инкек. Эп кĕтмен çĕртенех шыва сикрĕм, чуть çеç тата анса каяттăм..

ДОБРОВ. Мĕн тетĕр?.. Епле апла?

МАШЕНЬКА. Ĕнер каçхине эпĕ фабрикран тўрех кунта килме тухнăччĕ, çырмари кĕперпе каçнă чух сасартăк сумкăна ўкертĕм, унта укçа пурччĕ,

ДОБРОВ. Шыва?

МАШЕНЬКА. Шыва çав, укçи питĕ нумайччĕ.. Эп ăна фронт валли парне илме пуçтарнăччĕ..

Ăнлантăр-и? Ну эпĕ, нумай шутласа тăмарăм, сумка хыççăн шыва сикрĕм.

ДОБРОВ. Шыва?!

МАШЕНЬКА. Çапла çав, шыва.. Сумкине ярса илтĕм, анчах хам шыв тĕпнелле пута пуçларăм..

ДОБРОВ. Хă! Ну, малалла, малалла?

МАШЕНЬКА. Унтан вара эп тăна çухатнă... Тăн кĕрсен пăхап та—шыв хĕрринче выртатап... Халăхĕ нумай пухăннă тата. Лăплантарчĕç мана.. Ну, часах ăнланса илтĕм мĕн пулнине. Пăхап, ман сумка та укçа та хампа пĕрлех...

ДОБРОВ. Укçи мурне, хăвăр сывă-ха!

МАШЕНЬКА (Доброва итлемесĕр). Мана шывран, темле военнăй кăларчĕ терĕç.., Хăй васкасах карĕ, тет.. Таçта васканă пулмалла.

ДОБРОВ. Апла хăвăра çăлакана кураймарăр та иккен.

МАШЕНЬКА. Кураймарăм, мĕншĕн тесен эпĕ тăна çухатнă пулнă. (Йывăррăн сывласа). Тав тăвайманнишĕн питĕ хурланатăп...

ДОБРОВ. Питех те тĕлĕнмелле... Аван-ха, телей пулнă... Куншăн ĕнер килменнине каçарăпăр.. Паян та сире донор ĕçĕпе чăрмантармăпăр, мĕншĕн тесен халь сирĕн юн пăлханать, лăпланма кăштах вăхăт парăпăр...

МАШЕНЬКА. Всеволод Михайлович, эпĕ хама хам лăпланса çитрĕм пуль тетĕп.

ДОБРОВ. Тăхтăпăр, Машенька.. тăхтăпăр!

МАШЕНЬКА. Эсир мана çине тăрсах—Машень-

ка, тесе чӗнетӗр. Сире мӗн, ман хамӑн ят килӗшмест-им?

ДОБРОВ. Унщӑн мар. Машенька! Пӗлетӗр-и, Машенька тесен темле ӑшшӑн чӗннӗ пек туйӑнать. Атту Марина.. Марина.. Ҫук, кун пек темле, сиввӗн чӗннӗ пек туйӑнать..

МАШЕНЬКА. Э, аса илтӗм, доктор. Эсир манмарӑри-ха, леш ман юна парса сывалма пулӑшнӑ ҫынна кӑтартма пулнӑччӗ..

ДОБРОВ. Ҫапла, сӑмах панӑччӗ, сӑмах панӑччӗ, пурнӑҫлӑп, анчах халь вӑхӑт мар-ха, мӗншӗн тесен—шыва ӳксе ҫӳретӗр..

МАШЕНЬКА (К ӑ м ӑ л с ӑ р п у л с а). Ну, доктор.. Ну, хӑть пӗр секундлӑха ҫеҫ кӑтартӑр, а эсир ӑна эп камне ан калӑр...

ДОБРОВ. Ҫук, халь кӑтартмастӑп...

МАШЕНЬКА. Мӗншӗн, доктор?

ДОБРОВ. Мӗншӗнне докторсен ҫеҫ пӗлмелле. Тен мӗнле те пулин...(П ӑ х к а л а с а и л е т). Машенька, акӑ мӗн, сире задани... кунта килекен аманнӑ ҫынна, пуринчен аванрах пӑхас пулать...

МАШЕНЬКА. Епле пӑхас пулать?

ДОБРОВ. Эсир ӑна лайӑхрах астӑвӑр, ниҫта та ан ярӑр... Вӑл хӑйӗн чаҫне каялла каясшӑн... анчах халь иртерех-ха... Ҫавӑнпа та ниҫта та ан вӗҫертӗр...

МАШЕНЬКА. Юрӗ, доктор...

Богданов кӗрет, Машенькӑна курсан кӑшт чӗтресе илет, тӳррӗн пӑхать.

ДОБРОВ. Ну, сывлӑхсем мӗнле?

БОГДАНОВ. Пит аван, ҫавӑнпа та паҫӑр

каласса таталнă ĕçе пуçлăпăр... Кам кунта командир..?

ДОБРОВ. Эп, анчах (сехечĕ çине пăхать), ак тамаша... Чутех кая юлман... Ман обхода васкамалла. (Богданова). Эсир кăштах ларăр кунта, анчах ниçта та ан кайăр. (Каяс умĕн). Каçхи апата кая ан юлăр тата...

Каять.

БОГДАНОВ (пауза хыççăн). Доктор аван çын...

МАШЕНЬКА. Питĕ аван çын... Тўрлетессе те аван тўрлетет...

БОГДАНОВ. Çапла, аван тўрлетет, анчах мана ниçта та ямасть...

МАШЕНЬКА. Халь иртерех-ха...

БОГДАНОВ. Çук, ир мар... пĕртте ир мар... Вăл кама паллăрах?..

МАШЕНЬКА. Врача.

БОГДАНОВ. Врача... Хă... врачĕ, тĕрĕссипе каласан, нумай пĕлет те-ха вăл, анчах чĕре пăшăрханнине вăл нимĕн те пĕлмест.

МАШЕНЬКА (хăвăрт). Камшăн?

БОГДАНОВ. Тĕрĕссипе каласан—камшăн мар, мĕншĕн... Хам машинăшăн пăшăрханатăп... Самолет çинче ларас выранне—эп кунта пăчăхса ларатăп.

МАШЕНЬКА. Эсир летчик-им?

БОГДАНОВ. Летчик...

МАШЕНЬКА. Апла хăвăр çинчен каласа кăтартăр-ха.

БОГДАНОВ. Мĕн каласа кăтартас?

МАШЕНЬКА. Мĕн те пулин... Вĕçни çинчен?..
БОГДАНОВ. Мĕн каламалли пур: пирĕн ĕç—простой ĕç...
МАШЕНЬКА. Эп халиччен те вĕçсе курман-ха.
БОГДАНОВ. Шел...
МАШЕНЬКА. Ну, пĕр-пĕр вăрçă çинчен каласа кăтартăр.
БОГДАНОВ (майĕпе хĕрсе кайса). Çĕр... пĕлĕтсем... çăлтăрсем... Эпĕ хула тавра вĕçетĕп... Сасартăк—аякра мотор сасси. Паллах, кĕтмен хăна килет... Вĕçеп ăна хирĕç... Ак куратăп—бомбăсем çакса тултарнă тăшман машинне... Тӳрех ун енне вĕçме тытăнатăп... Анчах вăл, ман самолета курать те, пĕлĕтсем хушшинелле тарса пытанма тăрăшать... ун пек те кун пек улталасшăн мана, е ӳкнĕ пек аялалла вĕçет, е хăвăрт çӳлелле вĕçсе хăпарать.. Çук, тараймăн манран... Ак хуса çитетĕп... пулеметпа ăшалама пуçлатăп... вăл та мана перет... Мотор сассипе пулемет сасси хутăшса хăрушшăн кĕрлет, хăлхара çурас пек çĕмĕрлет... Нумайччен пырать çапăçу... Пулемет чылай шатăртатнă хыççăн тăшман çăханне вут хыпса илет... унччен те пулмасть, вăл арăш та пирĕш çĕрелле татăлса анать... Ӳкет... сирпĕнсе каять... Çунать... шуйттан! (Чарăнарах). Ман тăван хула çине фашист бомбисем ӳкеймерĕç... Ун вырăнне çĕрте фашист самолечĕсен таткисем çех йăваланса выртаççĕ. (Пауза хыççăн).
—А доктор мана ямасть...
МАШЕНЬКА. Ан васкăр... ярĕ... чăтăм кирлĕ...

БОГДАНОВ. Çапла, сире калама çăмăл вăлчăтăм... Эпĕ, хам машинăшăн юратнă хĕршĕн тунсăхланă пекех тунсăхлатăп. (П а у з а хыççăн). Сăмахран, ман пĕр ĕç пур халĕ. Ман пĕр хĕре тупас пулать.

МАШЕНЬКА. Епле çухатрăр вара?

БОГДАНОВ. Ман ăна ыр сунмалла, тав тумалла.

МАШЕНЬКА. Мĕншĕн?

БОГДАНОВ. Мана вилĕмрен хăтарнăшăн!..

МАШЕНЬКА. Мĕнле майпа?

БОГДАНОВ. Вăл хăй юнне мана панă... Ман ăна тупасах пулать, тав тăвас пулать... Вăл хĕр—Машенька ятлă терĕ доктор...

МАШЕНЬКА. Мĕн ятлă терĕр?

БОГДАНОВ. Машенька ятлă, тен эсир ăна пĕлетĕр те пулĕ?

МАШЕНЬКА. Эп... ăна... м-м-м... Çук... пĕл... пĕлместĕп...

БОГДАНОВ. Питĕ шел... Ĕнер эп ăна шырарăм... Хулара çўренĕ чух тĕпчекелерĕм, анчах хулара Машенька ятлă хĕрсем çав тери нумай... Çавăнпа та тупма питĕ хĕн... А сирĕн ятăр мĕнле?.

МАШЕНЬКА (Б о г д а н о в çине вăтанса п ă х с а).

Ман ят-и?. Марина...

БОГДАНОВ. Марина... лешне Машенька теççĕ... Машенька... Ман ăна тăрăшсах шырас пулать. Вăл хĕре тупмасăр чĕрем лăпланас çуках ĕнтĕ...

МАШЕНЬКА. Çапла, эпĕ сире ăнланатăп! Эпĕ те хама вилĕмрен çăлнă çынна тав тăвăттăм...

БОГДАНОВ. Эсир те аманнă пулнă-и-мĕн?

МАШЕНЬКА. Çук, эпĕ шыва путнăччĕ...

БОГДАНОВ. Ĕнер каçхине-и?

МАШЕНЬКА. Ĕнер каçхине, анчах эсир ăçтан пĕлетĕр?

БОГДАНОВ. Илтнипе çеç, такам лазаретра каласа кăтартрĕ те. Ну, кам-ха вара сире çăлчĕ?

МАШЕНЬКА. Кам çăлнине пĕлменни кÿрентерет çав мана... Вăл, мана шывран кăларнă та, хăй пăрахса кайнă. Камне те, ăçтине те пĕлместĕп. Ман ăна тупса питĕ пысăк тав тăвас килет. Мĕншĕн тесен, вăл паттăр ĕç тунă.

БОГДАНОВ. Мĕнех вара унта паттăрри?.. (Ыр кăмăллăн). Эсир, хĕрарăмсем, пуринчен ытла çамрăк хĕрсем... кирек хăçан та, темле романтикăллă шухăшсемпе калаçатăр... Мĕнех вара, шывра путакан çынна пурин те çăлма тăрăшас пулать... а вот хăйĕн юнне парасси...

МАШЕНЬКА (пÿлсе). Юн парасси те... аманнă красноармеецсем валли юн пама та пурин те тăрăшас пулать.

БОГДАНОВ. Епле тупам-ши эп ăна?

МАШЕНЬКА. Эпĕ те тупăттăм вăл çынна.

БОГДАНОВ. Кайăпăр иксĕмĕр—пĕрле шырама...

МАШЕНЬКА. Çук, кунтах пулар...

БОГДАНОВ. Мĕншĕн кунтах пулмалла-ха?

МАШЕНЬКА. Кунта лайăх чух мĕншĕн таçта каяс-ха?

БОГДАНОВ. Çук, çук... каяр...

МАШЕНЬКА. Ларăр та... ан тавлашăр... Пĕлетĕр вĕт, хĕрарăм хушнине итлес пулать...

БОГДАНОВ (х у й х ă р с а с ы в л а т ь). О-ох! (Л а р а т ь). Ну, мĕн ĕçлетĕр эсир, Марина, каласа кăтартăр?

МАШЕНЬКА. Эп-и?.. Манăн ĕç, сирĕнни пек геройла ĕç мар, эпĕ кĕпе-йĕм çĕлекен фабрикăра ĕçлетĕп...

БОГДАНОВ. Мĕнех вара... кирек мĕнле ĕç те, тăрăшса ĕçлесен, геройла ĕç пулать...

МАШЕНЬКА. Ĕçлессе эп хам ĕçе юратса ĕçлетĕп. (Ч у н х а в а л ĕ п е). Халь эпир Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем çĕлетпĕр.. Пирĕн, боецсене ăшăтакан тумтир çине пăхсан, çав тери чĕре савăнать... Вара ăшăрах та нумайрах çĕлес килет. (В ă т а н а р а х). Эпĕ те, тумтирсем ăшăрах пулчăр тесе, пĕр япала шутласа кăлартăм...

БОГДАНОВ Маттур!.. Пур боецсен ячĕпе сире тав тăватăп... (Т ă р а т ь). Ну, карăмăр...

МАШЕНЬКА. Ăçта?..

БОГДАНОВ. Хулана...

МАШЕНЬКА. Çук... Çук... Ниепле те май тухмасть... Ниçта та каймастăр эсир.

БОГДАНОВ. Мĕншĕн?

МАШЕНЬКА. Мĕншĕн тесен, эп сире ниçта та ямастăп!

БОГДАНОВ. Эсир мана чарма пултараймастăр...

МАШЕНЬКА. Пултаратăп, мана хушса хăварнă. Хăвăр пĕлетĕр, хушнă япалана пурнăçа кӳртес пулать...

БОГДАНОВ (ç и л е н с е). Тăна кĕрĕр-ха... Мĕне пĕлтерет ку, эп аманнă çын, кунта плена лекнĕ çын мар вĕт.

Добров кĕрет.

ДОБРОВ. Мĕн шавлатăр кунта, Богданов юлташ, каллех эсир пуль-ха?

БОГДАНОВ. Çук, доктор, эпĕ мар, эсир... Хаяр хуралçă хăвартăр, ниçта та ямасть...

ДОБРОВ. Тĕрĕс тăвать... сире ярсан, эсир тĕттĕм пулсан тин килетĕр, çитменне тата ĕнерхи пек йĕп-йĕпе пулса килетĕр...

МАШЕНЬКА. Йĕп-йĕпе?! Ĕнерхи пек?! (Б о г д а н о в а). Эсир ăçта йĕпеннĕ?

БОГДАНОВ. Эп... гм... çапла ĕç пулчĕ... урам хушшине шыв сапатчĕç те,ну, асăрхамасăр мана йĕпетрĕç...

МАШЕНЬКА. Тем, суя пек туйăнать... Каçхине урам хушшине шыв сирпĕтмеççĕ пулас...

ДОБРОВ. Тĕрĕс, Машенька... каçхине урама шыв сапмаççĕ.

БОГДАНОВ. Машенька?.. Сирĕн ят Машенька-и апла, анчах эсир Марина терĕр вĕт-ха?

МАШЕНЬКА. Вăл нимех те мар... Эсир мана тĕрĕссипе калăр-ха, мĕншĕн эсир ĕнер йĕпеннĕ? (Ш у х ă ш л ă н). А!.. аса килчĕ... Мана çă-

лаканăн хăрах аллине бинтăпа çыхнă терĕç... Епле-ха эпĕ тӳрех сăнаса илеймерĕм... Вăл эсир мар-и?

ДОБРОВ. Апла вăл эсир? Эсир пулнă ăна вилĕмрен хăтараканни?..

МАШЕНЬКА. Эсир-и мана çăлаканни?

БОГДАНОВ. Кӳрĕр аллăра!

МАШЕНЬКА. Парăр аллăра!

ДОБРОВ. Питĕ хавас, хаклă юлташсем... Ак, куратăр-и, хам панă сăмаха пурнăçа кӳртрĕм: сире пĕр-пĕрине кăтартрăм... Паллаштартăм...

МАШЕНЬКА (Доброва ыталаса). Пысăк тав сире, доктор.

БОГДАНОВ (Доброва пĕр аллипе ыталаса). Тав сире, доктор.

ДОБРОВ. Тархасшăн паçăрхи пек сывлăша ан çĕклĕр мана. Мĕнле халăх ку! Мĕнле халăх! (Ăшшăн кулса). Çав тери матур халăх!..

*Чаршав.*

Цена 2 руб.

*В. Потемкин*

**ТЕПЛЫЙ ТУЛУП**

***Чикарькова и Залесский***

**ИСПОЛНЕНИЕ ОБЕЩАНИЯ**

**Одноактные пьесы**

На чувашском языке
ЧУВАШГОСИЗДАТ—1944 г.
Чебоксары